25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 СЕНТЯБРЬ 16 ЮНКУН 216 (6151) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозсемпе совхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене, колхозсен правленийĕсене, МТС-сен тата совхозсен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене çĕрулмипе пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртесси, вĕсене хатĕрлев пункчĕсем патне турттарасси, вĕсене упрасси, тăварласа йÿçĕтесси, çавăн пекех тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хĕллехи вăхăтра сыхласа усрасси питех те пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен аса илтереççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене иртнĕ çулхи йăнăшсене тумалла марри çинчен асăрхаттараççĕ. Иртнĕ çулта хăшпĕр районсенче, сăмахран, Улатăр, Первомайски, Куславкка, Пăрачкав районĕсенче ĕçе начар организациленĕ пирки пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине пухса кĕртессине питĕ вăраха янă, çавна пула çĕрулмипе пахча-çимĕçсен пĕр пайĕ юр айне юлнă, шăнса пăсăлса нумай пĕтнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсоветсемпе хула совечĕсен исполкомĕсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен тата хула комитечĕсен секретарĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене тата колхоз председателĕсене çапла тума хушаççĕ:

1. Çĕрулмипе тымарçимĕçсене тата пахча-çимĕçсене октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, купăстана октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмĕшпех пухса кĕртмелле. Вăрлăхлăх акнă пахча-çимĕç культурисене тата вăрлăхлăх акнă участоксенчи çĕрулмине вăхăтра пухса кĕртес ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

2. Пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине тата вăрлăхлăх акнă участоксене пухса кĕртес, çавăн пекех тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине хĕллехи вăхăтра усрама хурас тĕлĕшпе колхозсем тăрăх—пилĕккунлăх заданисем, колхозсенче вара бригадăсем тăрăх—кулленхи заданисем памалла тăвас пулать.

3. Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи мобилизаци енĕпе ĕçлекен отделăн начальникне, çавăн пекех тата хула совечĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомсене хуласенчи, рабочи поселоксенчи, район центрĕсенчи ĕçлеме пултаракан çынсене, çавăн пекех тата учреждени-семпе предприятисенчи служащисене çĕнĕрен хушса мобилизацилеме тата вĕсене пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине пухса кĕртес тĕлĕшпе ĕçлемешкĕн колхозсемпе совхозсене пилĕккунлăх срокра яма хушас.

4. Чăваш АССР çĕрĕç халăх комиссарне Малов юлташа пахча-çимĕçсем пухса кĕртнĕ вăхăтра ĕçлеме опытлă учреждениссенчен, сорто-участоксенчен агрономсене тата вĕренÿ пуçланиччен вĕренÿ заведенийĕсенчи агрономсене мобилизацилеме, вĕсене пахча-çимĕçсемпе çĕрулми пухса кĕртес ĕçе организацилемешкĕн колхозсене яма хушас.

5. Çĕрулмине пухса илнĕ хыççăн çĕрулми пулнă участоксене обязательнăй йĕркепе сÿрелемелле.

Колхоз председателĕсене çĕрулми кăларнă çĕр лаптăкĕсене бригадăсенчен çав участоксене сÿрелесе тухса, çĕрулмине çĕнĕрен пухса илнĕ хыççăн тин йышăнма хушас.

6. Мĕнпур колхозсемпе совхозсенче, çавăн пекех тата хуласенче те çĕрулмипе пахча-çимĕçсем усрамалли вырăнсене мĕнле хатĕрлесе çитерни-не тĕрĕслесе тухмалла, ун пек вырăнсем çителĕксĕр хатĕрленĕ пулсан, çĕрулмипе пахча-çимĕçсене траншейăсемпе лайăх витсе хÿтĕленĕ купасенче (буртсенче) усрамалла тăвас пулать.

7. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене турттарнă çĕрте колхозсемпе совхозсенчи ĕнесемпе тата колхозниксемпе совхозсенчи рабочисен ĕнисемпе усă курмалла, çавăн пекех тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене усрамалли вырăн патне алăпа çĕклессине организацилемелле.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене колхозниксен ĕнисемпе турттарнăшăн, çавăн пекех тата алăпа çĕкленĕшĕн колхозниксене ĕçкунĕсем шутласа панисĕр пуçне, пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине усрамалли вырăн патне 2 километра çити турттарнă пулсан, мĕнпур продукцин 3 процентне натурăпа тÿлеме колхозсене ирĕк парас.

8. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене колхозсемпе совхозсенчен хатĕрлев пункчĕсене тата хуласене турттарма хулари автомобиль транспорчĕпе гужевой транспорта мобилизацилес.

9. Хуласенчи халăх валли тата хуласенче сутма тăварласа йÿçĕтсе хатĕрленĕ пахча-çимĕçсен хĕллехи запасне ÿстерес шутпа, колхозсемпе совхозсене купăстан, кăшманăн, кушшăмăн симĕс çулçисене, çавăн пекех тата симĕс сухана тăварласа йÿçĕтме сĕнес.

10. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленийĕ тăрăх, колхозсемпе совхозсенче вăрлăхлăх акнă участоксенчи çĕрулмине вăхăтра пухса кĕртсе çĕрулми вăрлăхне вăхăтра хывмалла тăвас, вăрлăх участокĕсем халиччен те уйăрман пулсан е вăрлăх участокĕсенчи çĕрулми начар пулсан, вăрлăх участокĕсене сортлă вăрлăх акнă чи тухăçлăрах пулнă вырăнсенчен уйăрмалла, ун пеккисем пулмасан вара ахаль вăрлăх акнă участоксенченех уйăрмалла.

11. Хĕрлĕ кăшман, кишĕр, сухан тата икĕ çул хушши ÿсекен ытти культурăсен вăрлăхĕсем пулса пынă май вĕсене çийĕнчех пухма тытăнмалла, вăрлăхлăх акнă, анчах пулса çитмен пахча-çимĕç культурисене сентябрĕн 25-мĕшĕ иртсен усă çĕртен хупă çуртсем ăшне пĕтĕмĕшпех пулса çитме илсе кĕртмелле. Вăрлăхлăх акнă пахча-çимĕçсем типсе çитсен, вĕсене тĕшĕлесе типĕтме, сортласа тасатма тытăнмалла тата вăрлăхсене Сортсемовощăн хатĕрлев пункчĕсене памалла.

12. ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен политотделĕсене çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хăвăртрах пухса кĕртсе турттарас ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе колхозсем, совхозсем, бригадăсемпе звеносем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилеме хушас.

13. Колхозсемпе совхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртмесĕр хирте хăварнăшăн, пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине пухса кĕртнĕ чухне тата усранă чухне пăсса пĕтернĕшĕн айăплисене çирĕп ответ тыттарма райсовет исполкомĕсен председателĕсене хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Н. БЕЛКОВ.

Н-ски чаçăн делегацийĕ Чăваш республикинче

Чăваш АССР ĕççыннисем пĕлтĕрхи кĕркуннеренпе Н-ски чаçăн (Хĕвеланăç фрончĕ) боецĕсемпе, командирĕсемпе тата политработникĕсемпе тачă çыхăну тытаççĕ.

Май уявĕ кунĕсенче Чăваш республикин делегацийĕ çав чаçăн боецĕсемпе командирĕсем патĕнче хăнара пулнăччĕ, май уявĕ ячĕпе пирĕн республикăри ĕççыннисем тăрăшса пухнă парнесене леçсе панăччĕ.

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш республикине Н-ски чаçăн делегацийĕ килчĕ. Делегаци составĕнче батальоннăй комиссар Орлов юлташ тата пирĕн тăвата земляк: старшина-орденоносец Константинов, старши лейтенант Эрзэ, политрук Иванов тата санитарнăй инструктор-орденоносец Раков юлташсем.

Çак кунех делегатсем Канаш районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан, «Мотор» тата «Красное пламя» колхозсенче пулнă. Фронтовиксемпе колхозниксем нумай вăхăт хушши кăмăллăн калаçнă. Фронтран килнĕ юлташсем колхозниксене совет воинĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене мĕнле пĕтерсе пыни çинчен каласа панă. Колхозниксем хăнасене хăйсен колхозĕсенчи хыпарсене каласа кăтартнă. Каçхине делегатсем ĕççынни депутачĕсен Канаш районĕнчи Совечĕн сессинче пулнă.

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче делегаци Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. Андреева юлташ, Совнарком председателĕ А. Матвеев юлташ патĕнче пулнă. Унтан делегатсене ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Н. Белков юлташ йышăннă.

Бородино музейне юсаççĕ

Ĕççынни депутачĕсен Мускав облаçĕнчи Совечĕн Исполнительнăй комитечĕ Бородино музейĕн çуртне, нимĕçсен фашистла войскисем ... çĕмĕрнĕскерне, юсаса ĕлĕкхи пекех туса хума йышăннă. Укçа тата кирлĕ материалсем уйăрса хунă. Мĕнпур ĕçсене уйăх çурăра — икĕ уйăхра туса пĕтермелле

Тылра вăя шеллемесĕр ĕçлесе, гитлерла захватчиксене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Иккĕмĕш воскресникĕн итогĕсем

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче ВЛКСМ Чăваш организацийĕ государствăна тырă парас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникне ирттерчĕ. Республикăри колхозсем 9.482 лавпа кайса государствăна 29. 260 центнер тырă панă.

Воскреснике Сĕнтĕр районĕнче лайăх организациленĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Давыдова юлташ, районри партипе совет оргăнĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлесе, комсомолецсемпе çамрăксен пысăк пайне воскреснике хутшăнтарнă. Çав районра хатĕрлев пунктне 793 лавпа 2430 центнер тырă леçнĕ. Çавăн пекех воскресник Комсомольски, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Елчĕк, Шăхасан районĕсенче лайăх иртнĕ.

Çав вăхăтрах комсомолăн уйрăм райкомĕсем воскресник ирттересси çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман. Сăмахран, Етĕрне районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Лягина юлташ) воскресник кунĕнче 160 центнер, Шăмăршă районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кузнецова юлташ)—360 центнер, Чкаловски районĕ (райком секретарĕ Задорова юлташ)—320 центнер тырă кăна хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Воскресник кунĕнче пулнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе, колхозсем государствăна тырă парас ĕçе вăйлатмалла.

ВОСКРЕСНИК ЛАЙĂХ ИРТРĔ

КАНАШ. (Телефонпа, хамăр корр.). Воскресник кунĕнче Канашри хатĕрлев пунктне тырă лавĕсем нумай пычĕç. Сывăх районсенчи колхозсем 2460 центнер тырă, вăл шутран 1744 центнер натуроплата тыррине леçсе пачĕç. Канаш районĕнчи колхозсенчен 170 лавпа 409 центнер тырă тиесе пынă. Шăхасан районĕнчен 238 лавпа пырса 773 центнер тырă панă. Çавăн пекех ытти районсенчи колхозсем те государствăна тырă пачĕç.

* * *

ИЕПРЕÇ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолецсемпе çамрăксем государствăна тырă парас тĕлĕшпе тунă иккĕмĕш воскресник лайăх иртрĕ. Хĕрлĕ обоз организацилесе, государствăна 802 центнер тырă леçнĕ. «МОПР» колхоз 105 центнер, «Красный металлист» колхоз 712 центнер, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 45 центнер леçнĕ. «Красный металлист» колхозра воскреснике райком секретарĕ Никишева юлташ ертсе пычĕ, Молотов ячĕпе тăракан колхозра воскреснике организацилес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ Павлов юлташ тăрăшса ĕçлерĕ. Кунта воскресникре кĕлтесене капана хывас тĕлĕшпе те ĕçленĕ. Пĕтĕмпе 41 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывреç

Октябрьски районри колхозсем уйри тырпулсене хăвăрт пуçтарса капана хывас ĕçре Пăрачкав районĕнчи колхозсен примерĕпе анлăн усă кураççĕ. Уйри çĕмелсенчи кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывас ĕç кунта анлăн саралнă. Çавăнпа та районри колхозсем сентябрĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче кĕлтесене капана хывас тĕлĕшпе ĕçĕн хăвăртлăхне чылаях ÿстерчĕç.

Сичĕпÿртри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Харитон Петрович Пушкин юлташ пире колхозниксемпе колхозницăсем уйри кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывас ĕçре пысăк тимлĕхпе ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

— Пирĕн колхозниксем çак лайăх пуçарăва çийĕнчех йышăнчĕç. Уйсенче вăхăтлăх итемсем туса, кĕлтесене икшер çыннăн носилкăсемпе йăтса капансем тăвас ĕçе эпир сентябрĕн 11-мĕш тĕлне вĕçлерĕмĕр. Çапла туман пулсан, пирĕн колхоз кĕлте кÿрес ĕçе 10—15 кун хушшинче те туса çитермен пулĕччĕ, тет вăл.

Чапаев ячĕпе тăракан колхоз виçĕ кун хушшинче алăпа йăтса пурĕ 110 гектар çинчи тырра капана хывнă. Сентябрĕн 10-мĕшĕнче, тĕслĕхрен, алăпа çĕклесе 35 гектар тата лашасемпе турттарса 125 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă. Уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем кĕлтесене алăпа йăтас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Норма тăрăх кашни икĕ çыннăн кунне 9 лав кĕлте йăтмалла пулсан, нумайĕшĕ ку нормăна ирттерсе тултараççĕ. Фекла Миролюбова, Ульяна Михайлова, Мария Зайцева, Пелагея Андреева колхозницăсем икшерĕн ĕçлесе кунне 12—14-шар лав кĕлте йăтаççĕ. 5-мĕш бригадăра А. Орловăпа Т. Арсентьева колхозницăсем сентябрĕн 10-мĕшĕнче 16 лав çĕклерĕç, 4-мĕш бригадăра В. Васильевăпа В. Леонтьева колхозницăсем кулленех 16—19-шар лав кĕлте çĕкленĕ. Капансем тăвакансем те нормăна кулленех ирттерсе тултараççĕ. Норма тăрăх вĕсен кунне капана 30 лав хумалла пулсан, С. Соловьев, С. Никифоров, В. Сидоров, А. Илитьев, В. Плотников колхозниксем кулленех 40—50-шар лав кĕлтене капана хываççĕ.

Ватă колхозник Петр Иванович Поликарпов юлташ колхоз бригадирĕ пулса ĕçлет. Хисеплĕ мучи вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче хăйĕн пĕтĕм вăйне Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва пулăшнă çĕре парать, çĕнтерÿ тăвасси шĕн тăрăшса ĕçлет. Ĕçе йĕркеллĕн те хăвăрт туса пырать вăл, унăн ĕçри примерĕпе колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ кулленех кун ÿссе пырать. Бригадăра кĕлтесене капана хывма çын çитмен. Поликарпов юлташ хĕрарăмсене капансем тума вĕрентет. Вăл вĕрентнипе унччен капан туса курман çамрăк хĕрарăм Анастасия Абрамова пĕр кун хушшинчех капан тума вĕреннĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Абрамова юлташ 31 урапа кĕлтене капана хывре.

Колхозниксем нимĕнле йывăрлăхсем умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Ĕçе хăвăрт пуçтарма алă çитмест пулсан, 80 çула çитнĕ старик сем те яш-кĕрĕм чухнехи пек хастаррăн ĕçлеççĕ, 12—13 çулти ачасем вăйпитти колхозниксенчен кая юлмасăр кĕлте кÿреççĕ. 80 çула кайнă ватă мучи Константин Федоров тимлесех капансем тăвать, вăл кулленех 30-шар урапа кĕлтене капана хывса типтерлесе хурать.

Колхоз тырра уйран пуçтарса кĕнĕ. Итемсем çинче ретĕн-ретĕн çÿллĕ капансем лараççĕ. Икĕ молотилка тырра кулленех пĕр чарăнусăр çапма тытăннă. Молотилкăсемпе кăна мар, тырра алăпа çапасси те анлăн пулса пырать. Кашни тÿрĕ кăмăллă колхозник, колхозница кулленех иртен пуçласа тĕттĕм пуличченех ĕçлеме тăрăшать, тĕттĕм пулсан, талăкра тунă ĕçе пăхса тухса ыранхи кун тумалли ĕçсене паллă тума колхоз бригадирĕсем правление пухăнаççĕ. Колхоз председателĕ Пушкин юлташ паян ĕçре пулнă çитменлĕхсене палăртать, вĕсене тÿрлетсе малашне тумалла маррине асăрхаттарать, ыран тумалли ĕçсене каласа парать.

— Паян 4-мĕш бригадăра урпана тÿсме çук япăх çапнă, 1-мĕш бригадăра та тулла тĕплĕн çапманни палăрчĕ, пучахра тырă нумай юлать. Ыран тулă пучаххисене тепĕр хут çапса илмелле, — тесе асăрхаттарать вăл бригадира.

Н. ПЕТРОВА.

„Сура“ колхоз япăх ĕçлет

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Пĕрремĕш Ирçери «Сура» колхоз халĕ те кĕрхи ака туса пĕтермен. Колхозăн иккĕмĕш итемĕ патĕнчи вырăнта 10 гектар çĕр лаптăкне акмасăрах хăварнă. Апла пулин те колхоз председателĕ Никитин Райçĕрĕç пайне «эпир кĕрхи тырăсене сентябрĕн 7-мĕшĕнче акса пĕтертĕмĕр», тесе суя сведенисем панă.

Колхоз кĕрхи тырăсене ытлашши тарăн акса хăварнă пирки 39 гектар çинчи тырă çурри ытла шăтман. Куçеç те мар, тракторпа çĕртме тунă вырăнта сухаламан вырăнсем юлнă пулнă, çак вырăнсене те колхоз сухаламасăр тата акмасăр хăварнă.

Колхоз уйхир ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе кая юлнă. Кĕлтесене халĕ те капана хывса пĕтермен, çĕрулми кăларма тытăнман, государствăна тырпул парас тĕлĕшпе те япăх ĕçлет.

Н. ЛЮБИМОВ.

Авăн çапас ĕçсене вăйлатмалла

Канаш райсовечĕн сентябрĕн 14-мĕшĕнче пулса иртнĕ 13-мĕш Сессийĕ районри колхозсенче кĕлте кÿрес тата авăн çапас ĕçсем мĕнле пулса пыни çинчен сÿтсе-яврĕ.

Сессире Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева, Действующи Хĕрлĕ Çартан килнĕ делегаци (батальоннăй комиссар Орлов юлташ тата хамăр земляксем-фронтовиксем) пулчĕç. Фронтовиксем хушшинче орденоносец Константинов юлташ пулчĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Орлов юлташ доклад турĕ.

— Канаш районĕнчи малта пыракан колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем,—терĕ докладчик,—кăçалхи вăйлă тырпула хăвăрт та пĕр тăкăкламасăр пухса кĕртрĕç. Аксаринăри Крупская ячĕпе тăракан, Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан, «Парижская Коммуна», «Комбайн», «Новая жизнь», Йалмачари «Майăн 1-мĕшĕ» ялхуçалăх артелĕсем уборкăри ĕçсене вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа туса пычĕç, тырпулсене типтерлĕн пухса кĕртрĕç. Паянхи куна ку колхозсем уйри кĕлтесене пĕтĕмĕшпех капанланă, кĕракине пысăк пахалăхпа туса хăварнă.

Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан тата Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывас ĕçе анлăн организациленĕ.

Анчах та Канаш районĕнчи колхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, кĕраки тăвас тата тырă вырса пухас ĕçсене ăнăçлăн вĕçлерĕç пулсан та, халĕ вырнă кĕлтесене турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсенче кая юлса пыраççĕ. Сентябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывас ĕçе районри 48 колхозран 22-шĕ кăна вĕçленĕ.

Кĕлтесене итемсем çине кĕртес тата авăн çапас ĕçсемпе уйрăмах Аччаялсоветĕнчи «Красная Армия», «Чуваш ЦИК» тата Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем, Чакаçри «Комсомол», Сухайкассинчи Молотов ячĕпе тăракан тата «Третья пятилетка» колхозсем юлса пыраççĕ.

Авăн çапас ĕçе те нумай колхозсенче тĕпренех вăйлатмалла, хăвăртлатмалла. Сентябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне район авăн çапмалли планне мĕнпурĕ те 40,5 процент çеç пурнăçланă. Нумай колхозсенче халĕ те молотилкăсемпе туллин усă курмаççĕ, хăшпĕр колхозсенче руководительсем МТС молотилкисене кĕтсе авăна алăпа çапассине пачах та çителĕксĕр организацилеççĕ.

Районра лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсем пурĕ 18 пур, анчах вĕсенчен кулленех 20-шер сехете çити 3-шĕ çеç ĕçлеççĕ. Ытти молотилкăсем е пачах ĕçлемесĕр лараççĕ, е талăкра 7—8-шар сехет çеç усăллăн ĕçлеççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан, «Третья пятилетка», «Красная Армия» колхозсенче молотилкăсене халĕ те ĕçе яман, Сталин, Чкалов, Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсенче авăна алăпа çапассине пачах та хак памаççĕ.

Доклад хыççăн усăллă прение Разумов, Кузьмин, Орлов—фронтран килнĕ делегацин руководителĕ, Андреева тата ыттисем те тухса каларĕç.

Орлов юлташ депутатсене Канаш районĕнчи ĕççыннисем шефа илнĕ Хĕрлĕ Çарăн Н-ски полкĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан вăрçăра паттăр ĕçсем туса пыни çинчен каласа пачĕ. Вăл полкăн Канаш районĕнчи ĕççыннисем патне янă çырăвне вуласа пачĕ. Орлов юлташ фронтовик-земляксен ячĕпе районри колхозниксемпе колхозницăсене уборкăри ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме чĕнчĕ. Сесси Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем патне ответлă çыру яма йышăнчĕ.

Сессире З. А. Андреева юлташ сăмах каларĕ. Вăл хăшпĕр колхозсем уборкăри ĕçсене черетлĕн тунине пула кая юлса пынине сивлерĕ, авăн çапас тата кĕлтесене капана хывас ĕçсенче ĕçе ал вĕççĕн тăвассине тивĕçлĕ вырăна хума кирлине тата çĕрулмине плугсемпе кăларса хăвăртрах пуçтарса илме кирлине палăртрĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Тăвай МТС-ĕ çулталăкри ĕç планне 100,4 процент пурнăçларĕ

Тăвай машинно-тракторнăй станцийĕ 1942 çулта тумалли ĕçсен планне (авăн çапассине шута илмесĕр) 100,4 процент пурнăçларĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне МТС пурĕ 17975 гектар çинчи ĕçсене тунă, 12.500 тенкĕлĕх горючи перекетлесе хăварнă.

Комбайнсемпе пурĕ 2.258 гектар çинчи тырпула пухса илнĕ. МТС-ăн ултă бригади, 12 комбайнерĕ тата 30 тракторисчĕ хăйсен çулталăкри заданине ирттерсе пурнăçларĕç.

НТС директорĕ И. ШИРОВ.

Политотдел начальникĕ В. ЧЕРНОВ.

Фронта вăйлăн пулăшас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарса ярар

Совет Союзĕнчи мĕнпур рабочисене, работницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене

Хаклă юлташсем!

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнине Совет Союзĕнчи ĕççыннисем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн йывăр та хăрушă кунĕсенче кĕтсе илеççĕ.

Совет Союзĕ гитлерла кĕтÿсемпе çулталăк ытла ĕнтĕ вăйлăн, хаяррăн кĕрешет. Пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăрах, тăшман хăйĕн салтакĕсен виллисем тăрăх пырса, малалла талпăнать. Фронт пирĕн çĕршыва нумай шалалла кĕрсе кайрĕ. Вырăссен аслă шывĕ — Атăл патне пымалли вырăнсенче тата Кавказ тăвĕсен умĕнче хаяр, юн нумай юхтаракан çапăçусем пыраççĕ.

Çак йывăр кунсенче Хĕрлĕ Çар, Ленинпа Сталинăн аслă ялавĕпе хавхаланса, юратнă тăван çĕршыва хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр хÿтĕлет. Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем тăшманăн войскисене çĕмĕрсе пыраççĕ, гитлерла дивизисене пĕрин хыççăн теприне строяран кăлараççĕ. Анчах та йывăр çапăçусем татах пулмалла-ха. Хĕл çывхарса килет. Гитлеровецсем çак юлнă уйăхсем хушшинче фронтра кирек мĕнле çухатусем тÿссе те пулин ăнăçусем тăвасшăн.

Гитлерла войскăсем тата нимĕç вассалĕсен войскисем пыра-пыра çапнине пирĕн Хĕрлĕ Çар хăй пĕччен чăтса ирттерет. Çапăçу питех те хаяррăн пырать. Кунта кашни ĕççынни пирĕн тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх килсе тăнине ăнланса илет. Çĕнтерÿ вăл хăй тĕллĕн пулмасть, ăна тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçса çĕнтерсе илес пулать. Çакна тумашкăн мĕнпур совет çыннисем икĕ хут, виçĕ хут вăйлăрах ĕçлени, пысăк йĕркелĕх, çирĕплĕх тата тимĕр пек çирĕп дисциплина кирлĕ.

Аслă датăна — Совет влаçĕ пулнăранпа 25 çул тултарнине паллă тумашкăн Ленин орденлĕ, Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ заводăн коллективĕ мĕнпур рабочисене, работницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илме, фронта вăйлăн пулăшас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнет.

Ленин орденлĕ, Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ заводра ĕçлекен рабочисен, работницăсен инженерла-техникла работниксен тата служащисен коллективĕ хăй çине çакăн пек социализмлă обязательствăсем илет:

1. Ĕç тухăçлăхне ÿстерес тата производствăна малалла сарса, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнă тĕле фронт валли продукци августра туса кăларнинчен 47 процент ытларах туса кăлармалла.

2. Сентябрьпе Октябрьте ĕç тухăçлăхне августринчен 4—5 процент ытларах ÿстермелле.

3. Продукцин хăйне ларакан хакне сентябрь уйăхĕнче август уйăхĕнчинчен 3 процент, Октябрь уйăхĕнче — 4 процент чакармалла.

4. Электричество энергине августра продукцин пĕр единици пуçне расходлама кăтартса панă нормăран 8 процент сахалтарах расходламалла.

5. Топливăна планра кăтартса панинчен 5 процент каярах расходламалла.

6. Шĕвĕ топливăна çулталăкра 3.500 тонна перекетлесе хăвармалла.

7. Технологи валли кирлĕ çусене 26 тонна перекетлемелле.

8. Рационализаци тĕлĕшпе çĕр сĕнÿрен кая мар пухмалла.

9. Çĕнĕ рабочисене 600 çынтан кая мар вĕрентсе çитермелле.

Ирĕклĕхшĕн, чыслăхшăн тата никама пăхăнманлăхшăн пыракан хаяр çапăçусен кунĕсенче тылра тата вăйлăрах, тата тимлĕнрех ĕçлесе тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартăпăр. Хамăрăн вăя шеллемесĕр, пĕр чарăнмасăр, пĕтĕм вăйпа ĕçлесе нимĕçсен вăрă-хурахла фашистла бандисене тытса чарма, хăваласа яма тата аркатса тăкма хамăрăн Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс-Çар Флотне пулăшар.

Пире малашне темĕнле йывăр пулас пулсан та, пирĕн вăл йывăрлăхсене çĕнтермелле. Тăшмана çапса аркатмалла, тăшмана аркатса тăкатпăрах!

Фронта вăйлăн пулăшас тĕлĕшпе пыракан Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сывă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, пирĕн юратнă полководец — Сталин юлташ!

Ленин орденлĕ, Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ заводăн рабочийĕсем, работницисем, инженерла-техникла работникĕсем тата служащийĕсем.

Заводра ĕçлекен работниксен коллективĕ хушнипе алă пуснă: ПРИГУЛЬСКИЙ, КЕЛЬНЕР, СКВОРЦОВ, КОБАНОВ, ТЯПКИНА, ЛАРИН, ПРОНИНА, КОПЕЙКО, ЯКИМЧУК, ДЕКТЯРЕВА, РАЗУВАЕВ, САФРОНОВ, ЯРОСЛАВОВА тата ыттисем те.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 18 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 130 автомашинине çити, горючи тултарнă 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 11 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин хаяр атакисене сире-сире янă. Н-ски часть хÿтĕленĕ участокра тăшманăн пĕр полкĕ тата 40 танкĕ наступлени турă. Пирĕн артиллерипе бронебойщиксем 9 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине виçĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре кавалерист-гвардеецсем гитлеровецсен икĕ атакине сирсе янă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче противник хăйĕн танкĕсене юхăнтывăн кăнтăр енне касарнă та пирĕн позицисене атакăланă. Вăйлă çапăçусем пулнă хыççăн пирĕн чаçсем оборонăн тепĕр рубежĕ патне чакнă.

Н-ски соединенири 26 снайпер иклашки вăхăтра противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене пин çынна ытла вĕлернĕ. Снайпер Ипатов юлташ 203 нимĕçе, Яволиев юлташ—195 нимĕçе, Чугаев Семенчук юлташсем —128-шар гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Воронежран кăнтăртарахра пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинче противникăн 5 хаяр атакине сирсе янă. Çав çапăçура гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ. Пирĕн боецсем икĕ пин салтакпа офицера çити, 20 танк тата противникăн 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Синявино районĕнче Рагинский юлташ ертсе пыракан боецсем противника пĕр çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Çав çапăçура нимĕçсен 5 танкне, 6 орудине пĕтерсе тăкнă. 40 землянкипе дзотне çити çĕмĕрнĕ, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Зениткăсемпе персе нимĕçсен 4 самолетне ÿкернĕ.

Пирĕн летчик-штурмовиксем противникăн аэродромне ăнăçлăн тапăннă, вĕсем нимĕçсен 38 самолетне тата горючи тултарнă 5 автоцистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 71-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 211-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Куммер çапла каласа панă: «Эпĕ Гальберштадтра самолетсем тăвакан «Юнкерс» заводра ĕçлеттĕм. Çак çулталăк хушшинче квалификациллĕ рабочисене, ĕлĕк отсрочкăпа усă курнăскерсене, пиртĕ нумай çара илсе кайрĕç. Нумаях пулмасть тата 500 çынна илчĕç. Германире час-часах çакăн пек калаçнине илтме пулать: «Хĕвелтухăç фрончĕ вăл—нимĕç салтакĕ каякан юлашки пункт. Россиĕран каялла таврăнса килме çук. Чи лайăх пулсан та унтан нимĕ юрăхсăр чăлахсене, урасăрсене илсе килеççĕ». Пĕр тăтăш пыракан çапăçусем салтаксене ывăнтарса çитерчĕç. Германия мĕнпур тĕнчене çĕнтерсе илмелле тесе пыр типиччен кăшкăракансем халĕ сахалланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Вĕсенчен пĕр пайĕ ĕнтĕ çапăçусенче вилсе выртрĕ, тепĕр пайĕ салхуланса пусне усрĕ. Халĕ нумай рабочисем ĕнтĕ çĕнтересси çинчен шухăшламаççĕ. Вĕсене малашне мĕн пуласси хăратать. Пуринчен ытла сывă харса килекен вырăс хĕлĕ хăратать».

* * *

Нимĕç салтакĕ Генрих çумĕнче вăл аппăшĕ патне яма тесе çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Нумаях пулмасть эпир питĕ йывăр кунсем пурăнса ирттертĕмĕр.

Каллех çынсемпе хĕçпăшалсем питĕ нумай пĕтрĕç. Вилнисем вырăнне çĕнĕрен çынсем хушса пачĕç. Вĕсем те кунта нумай пурăнаймарĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ ĕнтĕ кунти масарта выртаççĕ, ыттисене госпитальсене ăсатрĕç. Хушса панă çынсенчен мĕнпурĕ те 2 çын çеç тĕрĕс-тĕкĕл тăрса юлчĕç, ыттисем пурте стройран тухрĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем оккупациленĕ совет районĕсенчи мирлĕ пурăнакан çынсене çаратаççĕ тата вĕлереççĕ. Ленинград облаçĕнчи Гридино ялĕнче гитлеровецсем красноармеец арăмне Прасковья Ивановна Лосевăпа тата унăн виçĕ ачине нÿхрепе хăваласа кĕртнĕ те унта темиçе граната пăрахнă. Лосевăпа унăн ачисем вилнĕ.

* * *

Дордрехт портĕнче (Голландия) патриотсем Германие яма хатĕрлесе хунă авиаци моторĕсен пысăк ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Чугунçулăн Девентерпа Зутфен хушшинчи участокĕнче нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан поезчĕ крушени тÿснĕ. Паровоз тата 19 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

Сентябрĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿрен

Сентябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăра тăрса çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсен атакине сирсе янă, 2 танк тата 100 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери противникăн пухăнса тăнă пехотине сапаласа янă тата боеприпассем тиенĕ 6 автомашинине сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе янă, çав атакăсенче нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерĕ таран пĕтнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен танксене чарма тунă чăрмавсем умĕнче тăракан танкĕсене пирĕн артиллери пенĕ. Противникăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ. 5 танкне çунтарса янă. Гвардеец-минометчиксем тăшманăн пухăнса тăнă пехотине сасартăк пеме тытăнса, румын салтакĕсемпе офицерĕсене 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче нимĕç танкĕсен пĕр ушкăнĕ халăх пурăнакан пункта çĕмĕрсе кĕнĕ. Н-ски гвардейски чаçăн боецĕсем противникăн çав танкĕсене пĕтерессипе çапăçаççĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Н-ски соединенин боецĕсем вăйлăн çапăçнă хыççăн нимĕçсене халăх пурăнакан пунктран, çирĕплетнĕскертен хĕссе кăларнă. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 4 пин çынна çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен вуншар танкĕсене персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 11 орудине тата минометсен 6 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 15 оруди, пĕр танк, 15 пулемет, 60 автомат тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ.

* * *

Вилнĕ нимĕç офицерĕ Клейн çумĕнче ун патне Пирмонт хулинче (Германия) пурăнакан врач çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «...Пирмонт аманнисемпе тулса ларнă. Хальхи вăхăтра хулара 70 лазаретпа госпиталь ытла. Анчах та транспорт аманнисене илсе килсен, кашни хутĕнчех эпир вĕсене ниçта вырăнаçтарма аптăратпăр. Пур çĕрте те лăк тулли... Санитарнăй поездсем çĕрле килеççĕ. Пирĕн вара темиçе сехет хушшинче хула çывăрнă вăхăтра, мĕнпур аманнисене вырăнаçтармалла пулать. Анчах хăшпĕр чухне эпир виçĕ кун хушшинче те 50 пушă вырăн та тупаймастпăр. Аманнисем уççăнах ÿпкелешеççĕ, йынăшаççĕ, часах вара çынсем пухăнса тăраççĕ те калаçма, ытла тытăнаççĕ. Пире начальство хытă ятлать ĕнтĕ, анчах та врачсем нимĕн те тума пултараймаççĕ. Пирмонтра анчах мар, ытти хуласенче те çавăн пекех, çакă ытла та хуйхăртать...»

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче вилнĕ нимĕç лейтенанчĕ Карл Кресс çумĕнче Варшавăран Вилли Крафф çырнă çырăва тупнă. Вăл çырура çапла каланă: «Вырассем кунта килсе кайни çинчен эсĕ илтнĕ пулĕ ĕнтĕ. Эпир тарăн убежищĕне пытантăмăр, анчах та бомбăсем çурăлни унта та илтĕнетчĕ... Кайран эпир вырăссен ĕçне пăхса çÿрерĕмĕр. Питех те хăрушă. Эсĕ центрти вокзала хирĕç ларакан çинчĕ хутлă гостиницăна астума тивĕçлĕ. Унта вырăнти гарнизонри офицерсем çеç мар, ытти çĕртен килнисем те пурăнатчĕç. Бомба тÿрĕ лексе çав гостиницăна ишсе антарнă. Унта пулнă çынсем нумайĕшĕ вилнĕ. Çакă пурне те хуйхăртать: генеральнăй штабăн полковникĕ те, пĕр кун малтан çеç Берлинран килнĕскер, вилнĕ. «СС» казармисене çĕмĕрнĕ. Темиçе бомба форта лекнĕ. Темиçе çар предприятине тата хĕвеланăç енчи вокзал хытă сиенленнĕ. Вырăссем мĕн туса хăварнине каласа тухма та çук. Халиччен кунта пире пурăнма лайăх та канăçлăччĕ. Кашни çын вăл хăй инçетри тылра тăнине пĕлсе хавасланса пурăнатчĕ, хăйне хăрушсăрлăхра тесе шутлатчĕ. Вырăссем çапла шухăшлание пăсса кайрĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем Ленинград облаçĕнчи Станковски ялсоветĕнчи 5 яла çаратса тухса, нимĕн юлмиччен çунтарса янă. Гитлерла вăрă-хурахсем 384 çурта тата колхозниксен нумай хуçалăх хуралтисене çунтарса янă. Хресченсен пурлăхĕсене гитлерла бандитсем çаратса пĕтернĕ е çунтарса янă. Нимĕçсем мĕнпур вылăх-чĕрлĕхе илсе кайнă, продовольствине тытса илнĕ, хресченсене выçă вилмелле туса хăварнă. Колхозниксемпе колхозницăсене нумайĕшне вĕсем Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Нимĕçсен 49 танкне пĕтерсе тăкнă

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сентябрĕн 12-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕ Хĕвеланăç фронтĕнчи халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктăн хĕрринчи çапăçусем çинчен пĕлтернĕччĕ. Çав çапăçусем çинчен тĕплĕн каласа паратпăр.

Çирĕплетнĕ пунктсенче ларакан фашистсем пирĕн наступлени тăвакан чаçсене артиллерипе пулеметсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Фашистсем контратакăна 90 танк кĕртсе янă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем тата танкистсем пĕрле тăрса кĕрешсе, фашистсен 49 машинине çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă. Нимĕçсем малтан йышăнса тăнă позицисем патнех чакнă, хăйсен çĕмĕрĕлнĕ танкĕсене çапăçу хирне пăрахса хăварнă. Пирĕннисем нимĕçсене тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

Пирĕн гвардейски часть халăх пурăнакан пĕр питех те кирлĕ пунктшăн темиçе кун хушши çапăçнă. Çав пункта гитлеровецсем вăйлăн çирĕплетнĕ узел туса хунă пулнă. Пирĕн командовани асăннă пункта çĕрлехи çапăçура илме шут тунă. Ăна штурмлама гвардеецсенчен ударнăй группа организациленĕ.

Çĕрле боецсен группи çирĕплетнĕ пункта çĕмĕрсе кĕнĕ те хăвăрттăн пырса çапса противникăн боевой хуралне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем паникăна ÿксе тарма тытăннă. Боецсем пĕр çухатусăрах юханшыв урлă каçмалли каçăна йышăнса илнĕ те çапла вара кÿршĕри чаçсене малалла куçма çул туса панă.

Е. КАПЛАНСКИЙ.

Пирĕн автоматчиксем нимĕçсен штабне тапăннă

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Карпов лейтенант автоматчиксен ушкăнĕпе тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Супраев тата Верков боецсем нимĕçсен провочĕсем тăрăх Карповăн отрядне тăшман батальонĕн штабĕ патне илсе пынă.

Автоматчик Пущин тăшманăн провочĕпе сыхăннă та, нимĕç чĕлхине пĕлекенскер, гитлеровецсем калаçнине итленĕ. Пущин Карпова çапла каланă:

— Нимĕç офицерĕ хăйсен рота командирĕсене вĕсем яла тытса тăрайманшăн вăрçать. Вĕсене персе пăрахассипе хăратать.

Офицер калаçса пĕтереймен. Нимĕçсен блиндажне темиçе граната вăркăннă. Карпов лейтенантпа Новиков автоматчик землянкăна çĕмĕрсе кĕнĕ те унта нимĕç офицерĕ вилсе выртнине курнă. Вĕсем землянкăра пулнă нимĕçсен писарьне тата телефонистне персе пăрахнă та, карттăсемпе документсем тата хĕçпăшал илсе, пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

Малтанхи каçра автоматчиксем нимĕçсен ротин кухнине тата столовăйне çапса аркатнă пулнă. Фашистсем столовăй вырнаçнă палаткăна пухăнса çитсен тата повар каçхи апат пама тытăнсан, çакна сăнаса тăнă автоматчиксем палатка çине пулеметсенчен темиçе черет кăларса янă тата гранатăсем вăркăнтарнă. 20 нимĕçе вĕлернĕ. Тăваттăшне, вăл шутра повара та, тыткăна илнĕ.

Çав повар — Вильгельм Штуллер, Лейпцигра мясник пулнăскер, çапла каласа панă: нумаях пулмасть вăл ирхи апат 142 çын валли хатĕрленĕ пулнă, каçхи апата вара фельдфебель 60 çын валли кăна хатĕрлеме хушнă.

— Аçта кайса кĕнĕ вара ыттисем?— тесе ыйтнă пулнă Штуллер.

— Тăмсай,—вăрçса тăкнă ăна фельдфебель,—вырăссемпе вăрçасси—вăл сана Лейпцигра аш каскаласси мар, çакна хăвăнах пĕлмелле.

В. СОЛОВЬЕВ.

Якутири ĕççыннисен фашизма хирĕçле митингĕ

ЯКУТСК, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Якут АССР-ĕ 20 çул тултарнă май Якутскра фашизма хирĕçле митинг пулса иртнĕ. Рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕн представителĕсем пирĕн тăван çĕршыв умне хăрушлăх килсе тухнă вăхăтра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес ĕçе пĕтĕм вăя хума сăмах панă.

Митингри çынсем Сталин юлташ патне питĕ хытă хавхаланса салам янă. Халăхсен аслă çулпуçне—Сталин юлташа пĕтĕм чĕререн юратса тата чунтан парăнса каланă сăмахсенче совет Якутийĕнчи ĕççыннисен представителĕсем хăйсем тăван çĕршывăн ычлăхне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне совет халăхĕпе пĕрле юлашки юн тумламĕ юлмиччен хÿтĕлеме хатĕр тăнине каласа панă.

Оборона фондне

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри рабочисемпе служащисем кутаринччен çĕршыв оборонин фондне пĕтĕмпе 890.303 тенкĕ хывнă, вăл шутран кăçал 501.928 тенкĕ.

Вĕренÿ çулне хатĕрленмесĕр пуçланă

КАЛИНИНО. Мăн Явăшри туллимар вăтам шкул ку тарана çитсе те çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕр мар. Паянхи куна шкулăн пĕр вут сыппи те çук. Чылай классен чÿречисем ванчăк, кăмакисем кĕç-вĕç йăтăнса анас пек лараççĕ. Халĕ I—IV классем вĕренме тытăнчĕç ĕнтĕ. Классене юсаттарман. Хĕле кĕрсен директор айăпне пула вĕренекенсен тумтирсемпе, мулаххайсемпе лармалла пулать. Октябрĕн 1-мĕшĕнче V—VII классем вĕренме тытăнаççĕ. Вĕсен те юсаса лайăхлатман классене пырса кĕмелле пулать.

Шкул директорĕн А. Т. Иванова юлташăн шкула юсаттарасси, вутă турттарса хатĕрлесси çине ытларах савăрăнса пăхмалла.

И. ФЕДИНИН.

Редакцине килнĕ çыру

Хыркасси шкулĕнче мĕншĕн вĕри апат çук?

Шкулсенче ачасене вĕрентме пуçланăранпа икĕ эрне иртрĕ. Çапах та Ишлей районĕнчи Хыркассинчи туллимар вăтам шкулта ачасене валли вĕри апат пĕçерсе çитерме тытăнман-ха. Шкул дирекцийĕ ачасене валли вĕри апат пĕçерме продуктсем хатĕрленĕ, çак ĕçе йĕркелесе ярасси апат пĕçерме вырăн çуккипе тытăнса тăрать.

Шкул çумĕнчи ачасене валли апат пĕçерме ятарласа тунă çурт пур, вăл шкул çурчĕ шутланса тăрать. Анчах Ишлей райсоветĕн исполкомĕ иртнĕ çулта çав çурта вăхăтлăха çул çинче ĕçлекенсем валли уйăрса панăччĕ, унта 10 çын пурăнчĕç. Кăçалхи августăн 29-мĕшĕнче райсовет исполкомĕ çав çурта пушатса шкула каялла пама решени йышăнчĕ. Ку решение пурнăçа кĕртесси вара чарăнса тăрать. Шкул çуртĕнче пурăнакансем хăйсен ирĕкĕпе ăна пушатмаççĕ, райсовет исполкомĕ вара хăйĕн решенине пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Республикăри органсенчен çак ĕçе йĕркелесе ямашкăн пулăшма ыйтатпăр.

Я. ВАСИЛЬЕВ.

Хыркассинчи туллимар вăтам шкулăн директорĕ.

СУД

Ĕçе юхăнтарнăшăн тивĕçлипе айăпланă

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи машинно-тракторнăй станци кăçалхи çул уйри тырпулсене пуçтарса кĕртме питĕ начар хатĕрленнĕ. Иртнĕ çулта тырă вырса пуçтарнă хыççăн комбайнсемпе молотилкăсене вăхăтра мастерскойне илсе пыман, çавăнпа вĕсем тутăхнă.

Машинно-тракторнăй станци комбайнсене питĕ кая юлса, июль уйăхĕнче тин ремонтлама тытăннă. Çапла вара комбайнсене ремонтлас ĕçе кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ хыççăн тин, август уйăхĕнче ремонтласа пĕтернĕ. Апла пулин те МТС директорĕ пулнă Ельмаков Çĕрĕç Халăх Комиссариатне августăн 20-мĕшĕнче комбайнсене пурне те ремонтласа пĕтернĕ тесе суя сведени тăратнă. Çак вăхăт тĕлне МТС 5 комбайна çеç юсаса пĕтернĕ пулнă.

Комбайнсене ремонт туса пĕтерни çинчен суя актсем çырнă. Сăмахран, пĕррĕмĕш номерлĕ комбайна августăн 5-мĕшĕнче тин ремонт туса пĕтернĕ пулин те, вăл мĕнле ĕçленине тĕрĕслемесĕрех, ăна июлĕн 15-мĕшĕнче ремонтласа пĕтернĕ тесе акт çырнă.

Старши механик пулса ĕçленĕ Васильев тракторсене ремонтланă çĕрте 4-мĕш бригадăна пулăшас вырăнне чăрмантарса тăнă. Комбайнер Радченкăна «санăн комбайн тырă вырнă çĕрте ĕçлемест» тесе суйнă. Çапла ĕç çине ответсăррăн пăхнине пула, тырăсене вырнă çĕрте пурĕ те икĕ комбайн çеç ĕçленĕ. Вĕсем мĕн пурĕ те кĕрхи тырăсене 27 гектар, çуртырăсене 145 гектар çеç вырнă.

Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе преступленилле чăрмантарса пынăшăн тата ĕç çине ответсăрла пăхнăшăн, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи халăх сучĕ МТС директорĕ пулнă А. Ельмакова икĕ çул хушши, старши механик пулнă А. Васильева виçĕ çул хушши хупса усрамалла туса приговор йышăннă.

Ют çĕршывсенче

Румынире вăрçăн иккĕмĕш хĕлне хăраса кĕтсе тăраççĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем çырнисенчен çакă курăнать: Румыни влаçĕсем çар валли ăшă япаласем пухмалли кампание малалла тăснă, мĕншĕн тесен малтанхи кунсенче вăл кирлĕ результатсем парайман. Ăшă япаласем пухас ĕçе малтан шкул ачисене хушнă пулнă. Унтан, çак кампани пăчланса ларасси паллă пулса тăрсан, ăшă япаласем пухма войско чаçĕсене мобилизациленĕ.

Çывăхарса килекен хĕл Румыни влаçĕсене хăратать. Çак тĕлĕшпе «Курентул» хаçатра пичетленĕ статья кăтартуллă пулса тăрать. Автор Шейкару çапла çырать: «1941—42 çулхи хĕл йывăр та хăрушă пулчĕ. Вăл ултă уйăха пынисĕр пуçне тата ун умĕнхи ялхуçалăх çулталăкĕ начар пулчĕ. Эпир çĕнĕ тырă вырса иличчен пурăнкалармăр. Анчах 1942—43 çулхи хĕл те çăмăл пулмасть. Пирĕн тулă нумай çитмест. Кукуруза начар пулать пулмалла. Кăçалхи уяр санталăк хăйсен питех те йывăр пурнăçне çăмăллатма шутланă çынсене пурне те питĕ вăйлăн пырса çапать». Юлашкинчен Шейкару çапла çырать: истрире халиччен пулнă мĕнпур вăрçăсенчен те чи хăрушши пулса тăракан вăрçа эпир манмастпăр. Çак вăрçă тата мĕн чухлĕ вăхăта тăсăлассине эпир пĕлместпĕр. Тÿсме тата пурне те чăтса иртермешкĕн ăслă пулни кирлĕ. Пирĕн ытла пысăк требованисем лартмалла мар». Автор çынсене «ытти çĕршывсем тата начартарах пурăнаççĕ» тесе лăплантма чĕнет.

Гитлерла çыравçăсен тĕксĕм шухăшĕсем

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсем халĕ ĕнтĕ нимĕçсене вăрçă час пĕтесси çинчен тек шантармаççĕ, вĕсем нимĕçсене татах та ытларах жертвăсемпе асапсем тÿссе ирттерме çине тăрсах чĕнеççĕ. «Данцигер форпостен» хаçат, çынсем час-часах вăрçă хăçан пĕтĕ-ши тесе ыйту панине палăртса, çапла çырать: «Çак ыйту вăл питех те ăнланмалла ыйту, анчах ăна ĕççĕр алтăранă çынсем кăна пама пултараççĕ, мĕншĕн тесен, кунçул хăйĕн ĕçĕсене çав ĕçсемпĕн мĕн чухлĕ жертва туни тăрăх виçет». «Остдейчер беобахтер» хаçат вăрçă пуçланни виçĕ çул иртнĕ хыççăн ирĕксĕрех çакна палăртса çырать: «Германия чи татăклă событисен çурма çулĕнче тăрать. Çак çула хăçан утса тухасси çинчен эпир пĕлместпĕр. Пире халĕ йывăр испытанисем тÿссе ирттерме лекет-ха».

«Вăрçă тата хăçанччен пырассине никам та пĕлмест,—тесе çырать «Кракуэр цейтунг» хаçат, — анчах та вăрçă татах та ытларах жертвăсем ыйтассине пурте пĕлеççĕ».

Гитлерла пусмăрçăсем юнани

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Оккупациленĕ çĕршывсенчи рабочисем вĕсене Германие ирĕксĕр ĕçлеттерме янине хирĕç тăрасси вăйлансах пынине гитлерла хаçатсен ирĕксĕрех палăртма лекет. «Кельнише цейтунг» хаçат çапла çырать: «Практика çакна кăтартса пачĕ: рабочисене ĕçе ярас тĕлĕшпе оккупациленĕ çĕршывсем хальхи вăхăт мĕн ыйтнине халĕ те анланса илмен-ха». Çавăн пек хирĕç тăнине хаяр репрессисемпе пусарса лартасси çинчен хаçат хыттăн асăрхаттарать. Француз рабочийĕсене Германие ямалли плана халĕ те тултарманни пирки тарăхса, «Паризер цейтунг» хаçат çапла çырать: «Оккупациленĕ çĕршывсенчи, вăл шутра Францири те, мĕнпур рабочисене Германие ăсатас тĕлĕшпе лартнă требованисене нимĕçсем пурнăçа кĕрттерме пултарĕç».

Италин оккупациллĕ влаçĕсем кăларнă террорла приказсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: фашистла влаçсем Югославин, Словенин тата Далмацин оккупациленĕ облаçĕсенче «Итали влаçĕсемпе войскисен тĕлĕшпе тăшманла хăтланакан» кашни çынна вырăнĕнчех персе вĕлерессипе хăратса приказ кăларнă. Люблянра «хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем е взрыв тăвакан япаласем пур çынсене, çавăн пекех тата суя паспортлă çынсене тата çара илме çул çитнĕ пур çынсене те, çителĕклĕ сăлтавсăрах çар зонисенче тăраканскерсене персе вĕлерме хушакан приказ кăларнă. Кунсăр пуçне, фашистсен оккупаци пуçлăхĕсем «Итали салтакĕсене мĕнле çуртран вĕлерме хăтланнă, мĕнле çуртра хĕçпăшал тата çар хатĕрĕсем тупнă, мĕнле çуртра партизансем пытанса тăнă,—çав çуртсене пурне те ишсе тăкма приказ панă.

МАДАГАСКАРТИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хыпар панă тăрăх, Черчилль общинăсен палатинче çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 10-мĕшĕче ирхине империн Мадагаскарта кĕрешекен войскисем Маджунга, Морандава тата Носибе хулисене тытса илнĕ. Тăшман вăйлăн хирĕç тăман тата жертвăсем те нумаях пулман. Çавăнти операцисене пурне те план тăрăх туса пынă.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла плтерет: Англи войскисем Маджунга тата Морандава хулисене йышăнса илнĕ. Хальхи вăхăтра Англин моторизованнăй колоннисем Тананариза еннелле тапăнса пыраççĕ.

Гарриман Лондона пыни

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтăн хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закона пурнăçлас тĕлĕшпе Великобританире ĕçлекен специальнăй представителĕ Гарриман Лондона пынă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче пулнă чухне Гарриман Рузвельта хăй Черчилльпе пĕрле Мускава тата Çывăхри Хĕвелтухăçне кайса килни çинчен доклад туса панă.

Англи авиацийĕ Бремена тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Çурçĕр-Хĕвеланăç Германие тапăннă. Пуринчен ытла Бремена атакăланă, ун çине нумай вăхăт хушши бомбăсем пăрахнă. 19 самолет хăйсен базисене таврăнман.

ХРОНИКА

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ А. Е. Богомолов юлташа Совет Союзĕн Бельги правительстви çумĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ вырăнне лартнă.

ПĔЛТЕРÿ

1942 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, БКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинечĕн лекци вуламалли залĕнче агитколлективсен руководителĕсен канашлăвĕ пулать. Канашлу çак ыйтупа пулать:

«Отечественнăй вăрçăн хальхи самантĕнче тата агитаторсен задачисем».

Агитколлективсен тата агитгруппăсен пур руководителĕсен те обязательнăй йĕркепе пымалла.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

НАРКОМАТ СОЦИАЛЬНОГО ОБЕСПЕЧЕНИЯ ЧУВАШСКОЙ АССР СООБЩАЕТ,

что Чувашское Статистическое Управление Госплана СССР в гор. Чебоксарах открывает 1,5-МЕСЯЧНЫЕ КУРСЫ УЧАСТКОВЫХ ИНСПЕКТОРОВ для работы в районах. На курсы принимаются лица с образованием не ниже 7—8 классов средней школы.

Обучающиеся обеспечиваются стипендией в размере 150 рублей в месяц, квартирными в размере 50 рублей. Кроме того, поступившие на курсы могут быть зачислены на должность участковых инспекторов с окладом 190 рублей, который выплачивается все время пребывания на курсах.

Инвалиды отечественной войны обеспечиваются общежитием по линии Наркомсобеса.

Желающие поступить на курсы должны прислать заявление с приложением документа об образовании в подлиннике и автобиографии по адресу:

Г. Чебоксары, Канашская, 18, Статуправление Чув. АССР.

НАРКОМСОБЕС.

Чувашскому сельско-хозяйственному институту требуются уборщицы.

Обращаться: ул. К.-Маркса, дом № 34.

ДИРЕКЦИЯ.

Чебоксарскому филиалу Энерготрансучтекстиль

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу:

1. Преподаватель по автоделу,
2. Методист по энергокадрам (инженер-энергетик),
3. Шоферы-инструктора по монтажно-демонтажным занятиям,
4. Шофера-инструктора по практической езде.

Работу могут выполнять инвалиды отечественной войны.

За справками по всем вопросам обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, 2-й под'езд, канцелярия филиала.

Дирекция. 2—2

ЧУВАШСОЮЗУ ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу в г. Чебоксарах и в районах: ревизоры, главные и старшие бухгалтера, экономисты, преподаватели по учету и машинистка.

Обращаться: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашпотребсоюз. 3—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 931

Типографи №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.